(cc) BY


***Егорова Анна Семёновна***
канд. филол. наук, доцент
БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт
образования» Министерства образования
и молодежной политики Чувашской Республики
г. Чебоксары, Чувашская Республика

# ОБ ОСОБЕННОСТЯХ ОБУЧЕНИЯ ЧУВАШСКОМУ ЯЗЫКУ В 8 КЛАССЕ

***Аннотация****: в статье раскрываются особенности обучения чувашскому языку в 8 классе в школах с чувашским языком обучения. Описываются основные методы и формы работы. Особое внимание уделяется вопросам обучения чувашскому языку в лингвокультурологическом и сравнительно-сопроставительном аспектах.*

***Ключевые слова****: обучение чувашскому языку, планируемые результаты, учебное пособие, сравнительно-сопоставительное обучение, лингвокультурологический аспект.*

***Аннотаци****: статьяра чăваш чĕлхиллĕ шкулăн 8-мĕш класĕнче чăваш чĕлхине вĕретес уйрăмлăхсене уçса панă, вĕрентӳ мелĕсемпе формисене çырса кăтартнă. Чăваш чĕлхине лингвокультурологи çине таянса тата танлаштарса-шайлаштарса вĕрентесси çине пысăк тимлĕх уйăрнă.*

***Тĕп сăмахсем****: чăваш чĕлхине вĕрентесси, пулмалли результатсем, вĕренӳ кĕнеки, танлаштарса-шайлаштарса вĕрентесси, лингвокультурологи аспекчĕ.*

Тĕнчери лару-тăру та, халăх пурнăçĕ те, Федерацин патшалăх вĕренӳ стандарчĕсем те шкул вĕрентĕвне çĕнĕлле йĕркелеме хистеççĕ [7; 8]. Статья тĕллевĕ – вĕрентекене чăваш чĕлхине çĕнĕ стандартсемпе килĕшӳллĕн вĕрентме, Ю.М. Виноградовпа А.С. Егорова хатĕрленĕ «Чăваш чĕлхи. 8-мĕш класс» вĕренӳ пособийĕпе [1] ĕçлеме пулăшасси. Кĕнекене 2013 çулта чăвашла [10], 2018 çулта вырăсла [9] тухнă тĕслĕх программăна тĕпе хурса çырнă.


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Чи малтанах ачасен 8-мӗш класра чӑваш чӗлхине вӗреннин пулмалли результачӗсем ҫинче чарӑнса тарӑпӑр. ФГОС вӑя кӗриччен кашни урокрах виҫӗ тӗллев (сапӑрлӑх, аталану тата пӗлӳ тӗллевӗсем) лартаттӑмӑр. Халӗ ФГОС ыйтнине кура чӑваш чӗлхине вӗреннин виҫӗ результатне палӑртатпӑр.

1) харкамлӑх результачӗсем (кашни ача харпӑр хӑй аталаннине кӑтартаканнисем);

2) пур предмета та вӗренме кирлӗ результатсем;

3) предмет (чӑваш чӗлхине вӗреннӗ май кӑна пулакан результатсем) [6, с.84].

Харкамлӑх результачӗсем шутне Тӑван ҫӗршыва юратни, ӑна хисеплени, Тӑван ҫӗршыв умӗнчи тивӗҫлӗхе туйни, тӑван тата ытти халӑхӑн историне, чӗлхине, культурине хисеплени; тӑван мар тӗрлӗ халӑхӑн этикет нормисене хисеплени; ӗҫе хисеплеме вӗренни, ҫын тата общество пурнӑҫӗнче ҫемье пӗлтерӗшне ӑнланни; тӗнче курӑмӗ йӗркеленни; тепӗр ҫынпа пӗр тан шайра тытни, ӑна хисеплесе хутшӑнма пӗлни, хутшӑнура ҫураҫулӑх туйӑмне сыхласа хӑварни; сывлӑха упрама вӗренни; эстетика туйӑмӗ аталанни; ҫут ҫанталӑка упрама вӗренни тата ытти те кӗреҫҫӗ.

Вӗренӳ кӗнекинчи текстсем чылайӑшӗ кӑмӑл-сипет ыйтӑвӗсемпе ҫыхӑннӑ. Паллах, вӗсемпе ӗҫленӗ чух вӗрентекен текста, унти сӑнарсене тишкерттермесӗр иртсе каяймасть. Сӑмахран, *Текст ячӗ вырнаҫуллӑ-и? Мӗншӗн? Ӗнентер* йышши ыйтусемпе ӗҫсем пама пулать. Ачасем хӑйсен шухӑшне палӑртма, ӑна ыттисене ӗнентерме пултарччӑр.

Харкамлӑх результачӗсем мӗнле пуласси чылай чухне проект ӗҫӗсен темисенчен те килет. Сӑмахран, 31-мӗш хӑнӑхтару «Анне теми искусствӑра сӑнланни» проект ӗҫӗ тума ыйтать [1, с. 21], аннене хисеплеме вӗрентнипе пӗрлех чӑваш тата ытти халӑхӑн культурипе паллаштарать, эстетика туйӑмне аталантарать.

112-мӗш хӑнӑхтарура палӑртнӑ проект ӗҫӗ [Ҫавӑнтах, с. 61] чӑваш чӗлхипе кулленхи пурнӑҫра анлӑрах усӑ курма хӑнӑхтарать, чӑвашшӑн чӑвашла хатӗрленӗ реклама тексчӗ витӗмлӗрех, кӑмӑллӑрах пулнине ӗнентерме пулӑшать.

178-мӗш хӑнӑхтарура тума ыйтнӑ «Пирӗн тӑрӑхпа ҫыхӑннӑ топонимсем» [Ҫавӑнтах, с. 98–99] проект ӗҫӗ тӑван ен историпе культурине пӗлме пулӑшать,


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

çут çанталăкпа пĕрлех чĕлхене те упрама вĕрентет. Вырăнти материала кура темине ансăрлатма та пулать: «Пирĕн тăрăхри шыв-шур ячĕсем», «Пирĕн тăрăхри уй ячĕсем» т.ыт.те.

Куратпăр ĕнтĕ, вĕрентекенсем ачасемпе сапăрлăх (воспитани) тĕлĕшĕнчен тăвакан ĕç-хĕл харкамлăх результачĕсенче палăрать. Çавăнпа урок валли харкамлăх результачĕсене палăртма йывăрах пулмалла мар.

Пур предмета та вĕренме кирлĕ результатсем шутне предметсем хушшинчи ăнлавсем тата универсаллă (кулленхи) вĕренӳ ĕç-хĕлĕ кĕреççĕ.

Предметсем хушшинчи ăнлавсем тесе *система, факт, феномен, анализ, синтез* йышши ăнлавсене калаççĕ, вĕсем ачасен вулав компетенцине аталантарма, информаципе тата проектпа ĕçлес хăнăхăва алла илме пулăшаççĕ.

Универсаллă вĕренӳ ĕç-хĕлĕн виçĕ ушкăнне палăртаççĕ: 1) ĕç йĕркелӳ; 2) хутшăну; 3) пĕлӳ-тĕпчев.

Пур предмета та вĕренсе аталаннă результатсем пулччăр тесен ачасене пуплевĕн мĕн пур тĕсĕпе усă курма, информаци шыраса тупса унпа ĕçлеме вĕрентмелле. Ку результатсем патне çитерме мăшăрпа тата ушкăнпа, тĕрлĕ схема-таблицăпа ĕçлени пулăшать. Ун йышши ĕçсем вĕренӳ кĕнекинче çителĕклех.

Реклама тексчĕпе ĕçлеттерни (110–112-мĕш хăнăхтарусем) [1, с. 98–99], сăмахран, универсаллă вĕренӳ ĕç-хĕлĕн кашни тĕсне йĕркелеме май парать, чăн пурнăçра кирлĕ пулакан хăнăхăва аталантарать.

Çапла вара, пур предмета та вĕренсе илекен результатсем пĕтĕм предметпа та пĕр темелле, çапах та чăваш чĕлхи урокĕсенче ачасене чăвашла калаçтарса аталантармалла, чăвашла хутшăнма вĕрентмелле. Тĕп результат кунта – ачасене аталантарасси. Эппин, урокăн пур предмета та вĕренме кирлĕ результачĕсене палăртнă чух аталану тĕллевĕсене шута илмелле.

Предмет результачĕсем урок темипе тӳррĕн çыхăннă [10, с. 6–8]. Вĕсене чăваш чĕлхин фгосреестра вырнаçтарнă тĕслĕх программинче питĕ тĕплĕ ăнлантарнă [9]. 8-мĕш класра хутсăр предложенисене малалла тишкеретпĕр, вĕсене кăткăслантаракан пĕр йышши членсем, чĕнӳсем, кӳртĕм сăмахсемпе



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

предложенисем, уйрӑмлатнӑ сӑмахсем ҫинчен пӗлӳ илетпӗр, урӑх ҫын сӑмахӗсене пӗлтермелли тӗрлӗ меле ӑса хыватпӑр, хутлӑ предложенисемпе паллашма пуҫлатпӑр, ҫыхӑну паллисӗр хутлӑ предложенисене тишкерме хӑнӑхатпӑр. Ҫавӑн пекех 8-мӗш класра «Текст» темӑна малалла вӗрентпӗр: чӗлхен функцирен килекен тӗсӗсене пӑхса тухатпӑр, ӗҫлӗ стильпе таранннӑн паллашатпӑр.

8-мӗш класс валли хатӗрленӗ вӗренӳ пособийӗнче танлаштарса-шайлаштарса вӗрентессин ҫине пысӑк тимлӗх уйӑрнӑ. Пирӗн шутпа, чӑваш чӗлхине хурӑнташ чӗлхесемпе танлаштарнӑ май ротацизм ламбдацизм, лексика тата грамматика уйрӑмлӑхӗсемпе пӗрпеклӗхӗсем ҫинче ытларах чарӑнса тӑмалла [3, с. 288]. Танлаштару материалне кӗнекере хӑнахтарусенче кӑна мар, «Пӗлетӗр-и эсир?» «Танлаштарӑр», «Сӑмах ҫӳпҫи» рубрикӑсенче те асӑрхама пулать, сӑмахран, чӑваш чӗлхинчи *хула* «город» сӑмах ытти тӗрӗк чӗлхисенче *кала* «хула», *кале, кала, гала* «крепость» пулать [1, с. 73].

Вӗрентӗве лингвокультурологи аспектне пӑхӑнса йӗркелени вӗрентӗвӗн тӗп принципӗсене пурнӑҫлама майсем туса парать [5, с. 72]. Вӗренӳ кӗнекинче акӑ лингвокультурологипе ҫыхӑнтарса тумалли ӗҫсем чылай. Тӗслӗхрен, 14-мӗш хӑнӑхтарура [1, с. 14] кайӑк ячӗсен, 127-мӗш хӑнӑхтарура [Ҫавӑнтах, с. 69] йывӑҫ ячӗсен шалти пӗлтерӗшне тишкермелле.

Ик тата нумай чӗлхелӗх тавралӑхӗнче чӑваш чӗлхине лингвокультурологи ҫине таянса тата ытти чӗлхесемпе танлаштарса-шайлаштарса вӗрентни ачасен чӗлхе тавҫӑрулӑхне аталантарать, нумай пӗлес килнине ӳстерет, тӑван чӗлхене хаклама вӗрентет [2, с. 74].

Тӗп шкул пӗтерекен ачан пӗлӗвне пӗтӗмӗшле аттестаци картинче хакланӑ пирки республикӑн пӗрлехи экзаменне хатӗрлесси 8-мӗш класра малалла пырать. Кӗнекере ӑслав сочиненийӗ валли тезис калӑплама (18-мӗш хӑнӑхтару) та [1, с. 16], аргументсем тупма (91-мӗш хӑнӑхтару) та [Ҫавӑнтах, с. 50–51] вӗрентнӗ. Сочинени ҫырнӑ чух усӑ курма юрӑхлӑ текстсем те чылай. Сочиненипе изложенисем ҫырма вӗренме «Чӗлхе тата пуплев» теори теми тата ятарласа кӗртнӗ «Текст» тема пулӑшать. Текст тытӑмне час-час аса илтерме хӑнӑхтарусем валли кӗртнӗ текстсемпех усӑ курма юрать.


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Урока кăсăклăрах ирттерес тата сăмахри сасăсене тĕрĕс калама хăнăхтарас тĕллевпе вĕренӳ кĕнекинче хăвăрт каларăшсем чылай илсе панă. Вĕсемпе ĕçлемелли методикăна тахçанах пурте пĕлеççĕ: кашни сăмахпа сасса уçăмлă васкамасăр каланинчен пуçламаллла та питĕ хăвăрт каласси патне çитмелле. Кĕске каларăшсене пĕрре сывласа илнĕ вăхăтра каласа ĕлкĕрмелле, вăрăммисенне вара малтан интонацине палăртмалла.

Усси ытларах пулăр тесе калама йывăр сасăсене палăртакан сас паллисене тĕспе уйăрмалла е аялтан туртса паллă тумалла. Хăвăрт каларăшсене вĕреннĕ май шухăшлава аталантарма алă хусканăвĕ пулăшать.

Кану вăхăтĕнче хăвăрт каларăшăн кашни сăмахне каланă май ал-урана çапла хускатма пулать:

1) алă пӳрнисене чышкăна (чăмăра) пуçтарса чăмăртама;

2) алă пӳрнисене йĕркипе (черетпе) хуçлатма;

3) пуçра шухăшланă клавишăсем çине пӳрнесемпе черетпе пусма;

4) ал тупанĕпе сĕтеле шаккама;

5) урапа тăпăртатма;

6) пуçа сулма т.ыт.те.

Çапла вара, чăваш шкулĕн 8-мĕш класĕнче шкул ачисене республикăн пĕрлехи экзаменне хатĕрлесси çине пысăк тимлĕх уйăрмалла, лингвокультурологи çине таянса тата танлаштарса-шайлаштарса вĕрентмелле, уроксене кăсăклă та тухăçлă ирттермелле.

***Список литературы***

1. Виноградов Ю.М. Чăваш чĕлхи: 8-мĕш класс валли / Ю.М. Виноградов, А.С. Егорова. – Чебоксары: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2018. – 223 с.

2. Егорова А.С. Обучение чувашскому языку в дву- и многоязычной среде / А.С. Егорова; под ред. А.Д. Ахвандерова // Национальные языки и литературы в условиях би- и полилингвизма: сб. научных трудов. – Чебоксары: Изд-во ЧГПУ, 2019. – С. 72–75.

3. Егорова А.С. Обучение чувашскому языку в сравнительно-сопоставительном аспекте / А.С. Егорова; под ред. И.С. Мансуров // Проблемы



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

современной тюркологической науки: сборник научных трудов. – Стерлитамак: Стерлитамакский филиал БашГУ, 2019. – С. 287–289.

4. Егорова А.С. Основы исследовательского обучения школьников чувашскому языку / А.С. Егорова // Ашмаринские чтения: сб. материалов XI Междунар. науч.-практ. конф. (Чебоксары, 25 апреля 2019 г.). – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2019. – С. 177–178.

5. Егорова А.С. Чăваш чĕлхине лингвокультурологи çине таянса вĕрентесси / А.С. Егорова; под ред. Ж.В. Мурзина, Г.В. Николаева, С.П. Русскова // Проектирование механизмов реализации образовательных инициатив: материалы I Всерос. научн. метод. конф. (Чебоксары, 22 августа 2017 г.). – Чебоксары: ИД «Среда», 2017. С. 72–74.

6. Егорова А.С. Чăваш чĕлхипе литература урокĕсене ФГОСпа килĕшӳллĕн ирттересси / А.С. Егорова; под ред. А.Д. Ахвандерова, Е.А. Андреева // Национальные языки и литературы в поликультурных условиях: сб. статей. Ч.2. – Чебоксары: Изд-во ЧГПУ, 2017. – С. 84–86.

7. Исаев Ю.Н. Обеспечение условий для изучения и использования языков народов Российской Федерации в образовательных организациях Чувашской Республики / Ю.Н. Исаев; под ред. Ж.В. Мурзина // Актуальные вопросы исследования и преподавания родных языков и литератур: материалы Междунар. науч.-практ. конф. (Чебоксары, 16 ноября 2019 г.). – Чебоксары: ИД «Среда», 2020. – С. 204–206.

8. Исаев Ю.Н. Состояние и перспективы развития системы образования Чувашской Республики / Ю.Н. Исаев; под ред. Ж.В. Мурзина // Образование: теория, методология, опыт. – Чебоксары, 2019. – С. 5–29.

9. Примерная образовательная программа по учебному предмету «Родной чувашский язык» для общеобразовательных организаций (5–9 класс) (fgosreestr.ru) [Электронный ресурс]. – Режим доступа: https://fgosreestr.ru/registry/primernaya-obrazovatelnaya-programma-po-uchebnomu-predmetu-rodnoj-chuvashskij-yazyk-dlya-obshheobrazovatelnyh-organizatsij-5–9-klass/


Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

10. Андреев И.А. Чӑваш чӗлхи. Тӗслӗх программа. Чӑваш шкулӗн 5–9 класӗсем валли / И.А. Андреев, Ю.М. Виноградов, Г.Н. Семенова. – Чебоксары: Чӑваш республикин вӗренӳ институчӗн издательство центрӗ, 2013. – 63 с.


Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)